## Хаклă тăвансем, чăваш пичет ĕçченĕсем!

Сире кашни çулах кăрлач уйăхĕн виççĕмĕш вырсарни кунĕнче савăнăçлă паллă тăвакан Чăваш пичечĕн кунĕ ячĕпе хĕрӳллĕн саламлатпăр. Сирĕн пархатарлă ĕçĕр çынсен чунĕсене тăван чĕлхепе ăшăтать, вĕсенче шанчăка çунатлантарать, çамрăк ăрăва халăх йăли-йĕркисем, юрри-кĕввисем çинчен аса илтерсе тăрать. Эсир хăвăр тăрăхри пурнăçа çутатса тăнипе пĕрлех Чăваш Республикине, унăн Президенчĕн Н.В.Федоровăн ĕçĕ-хĕлĕ çинчен те час-часах çырса тăратăр. Тавах сире уншăн.

Сире пурсăра та çирĕп сывлăх, творчествăллă ăнăçусем, çутă телей сунатăп.

**Чăваш Республикин пичет тата информаци политикисен министрĕ Наталья Ивановна ВОЛОДИНА.**

*Чăваш пулар, пĕрле утар!*

# Сувар

4№ (474)
эрнекун
кăрлач уйăхĕн (январĕн) 24-мĕшĕ, 2003 çул

**Республиканская общественно-политическая чувашская газета**
**Тутарстан Республикинчи чăвашсен обществăпа политика хаçачĕ**

# РОАЛЬД САГДЕЕВ ТУТАРСТАНРА

Тутарстанран тĕнчере паллă çынсем сахал мар тухнă. Вĕсенчен пĕри уйрăмах чаплă. Вăл Роальд Сагдеев. Иртнĕ эрнере ăна тăван республикăра чысларĕç. Пысăк ăсчахăн ячĕсене те каласа тухасха: физик, СССР Наукăсен академийĕн тата Тутарстан Наукăсен академийĕн чăнчăн членĕ. 1986 çулта ăна Социализмла Ĕç Геройĕн ятне панă. 1956–1961 çулсенче Атом энергийĕн институтĕнче ĕçленĕ. Унтан 1970 çулччен Ядерлă физика институтĕнче (Новосибирск), 1970 çулта Мускавра Пысăк температурăсен институтĕнче ĕçленĕ. 1973–1988 çулсенче Космос тĕпчевĕсен институчĕн директорĕ. 1989 çултанпа АПШри Мериленд университетĕнче. Плазма физики тата космофизика енĕпе нумай ĕçсем çырнă.

Январĕн 16-мĕшĕнче Тутарстан Президенчĕ Минтимер Шаймиев Роальд Сагдеева «ТР наукăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» пулни çинчен свидетельство пачĕ. Ăсчаха чысланă чухне унăн мăшăрĕ Сьюзен Эйзенхауэр — АПШ 34-мĕш президенчĕн мăнукĕ — пулнă.



Роальд Сагдеев академик тĕнче уçлăхне тĕпчес енĕпе питĕ нумай ĕç тунă. Ăна наука пĕлет, хаклать. Тутарстан ывăлĕ çавăнпа та пĕтĕм тĕнче çынни.

Эпир Хĕвеланăçа, Хĕвелтухăçа сывăхлатассишĕн тăрăшакансем, çак юхăма пуçаракансем, терĕ Сьюзен Эйзенхауэр. Роальд — Вашингтонра чи малтан пурăнма пуçланă тутарсенчен пĕри. Унпа тĕл пулнăшăн эпĕ питĕ савăнатăп. Çĕр çинче христиансемпе мăсăльмансен пĕр килти пек пурăнмалла. Пирĕн çемье тĕслĕхĕ çак шухăша çирĕплетет.

Роальд — АПШ президенчĕн мăнукĕн чĕрине тыткăна илекен пĕрремĕш тутар, терĕ Минтимер Шаймиев. Анчах та тутарсен йĕрки çапла: арăмĕн упăшкине пĕтĕмпех пăхăнмалла, шӳтлерĕ Президент. Çемьере вăл тутар арçынĕ пек туйăнать-и?

Килте «тутарпа» час-часах тĕл пулкалатпăр, хуравларĕ Сьюзен. Анчах та шӳтлеме чарăнса Тутарстана тĕплĕнрех пĕлес шухăш çине куçрĕ. Ун çинчен вăл Америкăра каласа парасшăн.

Тĕлпулура ТР Президент Аппарачĕн пуçлăхĕ Экзам Губайдуллин, ТР премьер-министрĕн çумĕ Роберт Миннуллин пулчĕç.

**«Татар-информ» пĕлтернĕ тăрăх.**
**Наиль КУРАМШИН сăнӳкерчĕкĕ: РНАн Хусанти филиалĕн президиум президенчĕ А.И.Коновалов саламлать.**

# ПĂВАРА СЛЕТ ИРТРĔ

Кăрлачăн 20-мĕшĕнче Пăвара районта малта пыракансен слечĕ иртрĕ. Унта пĕлтĕрхи кăтартусене районпа хула администраци пуçлăхĕ А.К.Садретдинов пĕтĕмлетрĕ.

Иртнĕ çулта район малалла аталанни курăнсах тăрать, малтан палăртнă планран чакман. 2002 çулта пĕтĕмпе 1 миллиард та 554 миллион тенкĕлĕх продукци кăларнă, 1,7 процент ӳснĕ. Районĕпе 73 миллион тенкĕ тупăш илнĕ. Район бюджетне 133,6 миллион тенкĕ налук кĕнĕ. 2001 çулпа танлаштарсан 1,8 хут ытларах.

Çынсен ĕç укçи ӳснĕ, вăтамран кашни ĕçчен уйăхне 2326 тенкĕ илет.

Ял хуçалăхĕнче çичĕ пин çын ĕçлет. Вĕсем 101 пин гектар çинче тырпул тата тĕрлĕрен культурăсем ӳстереççĕ. Районта вăтамран кашни гектартан 47,1 центнер тырпул пухса кĕртнĕ. Пĕтĕмпе 226,9 пин тонна тырă çапса илнĕ, 118,5 пин тонна сахăр кăшманĕ кăларнă, 304 тонна (106 процент) аш-какай туса илнĕ, 5,3 пин тонна сĕт сунă. Кашни ĕне 3756 килограмм сĕт панă, ку 2001 çулпа танлаштарсан 306 килограмм ытларах.







Малта пыракансен тĕслĕхĕ пысăкрах кăтартусем тума май пуррине кăтартать. «Коммуна», «Татарстан», «Искра», «Марс» хуçалăхсем кашни гектартан 60 центнертан ытларах тырă пухса илнĕ.

Çав вăхăтрах «Тан», «Мир», «Фролово», «Новый путь», «Заря» хуçалăхсенче тырпул тухăçĕ пĕр гектартан 26–34 центнер шутланать. Ку, паллах, сахал.

Уйрăм хуçалăхсенче питĕ аван ĕçлеççĕ. «Коммуна», сăмахран, кашни ĕнерен 6951 килограмм сĕт сăвать. Ку район кăтартăвĕнчен 3195 килограмм ытларах, ытлашши сĕтшĕн 3 миллион та 354 пин тенкĕ укçа илнĕ.

Строительсем чылай ĕç тăваççĕ. Çу тата чăкăт комбиначĕн пысăк çурчĕ ӳсет. Тырă тасатса хатĕрлекен комплекс тăвасси вĕçленет. Таса спирт завочĕ çĕкленет. Шкулсем, культура центрĕсем тăваççĕ. Çулталăкра 138 пурăнмалли çурт çĕкленĕ. Ялсене газ кĕрет. Çулталăкра 10,9 километр газ пăрăхĕ хунă.

Пĕтĕмлетсе каласан, Пăва районĕнче производство аталанать, çынсен пурнăçĕ лайăхланать.

Слетра Тутарстан Премьер-министрĕ Р.Миннихანов пулчĕ.

**Николай СТЕПАНЦЕВ.**
**Автор сăнӳкерчĕкĕсенче: Р.Минниханов; А.Садретдинов; «Память Ленина» хуçалăх доярки Т.Дубова.**

### *КЛУБПА ШКУЛ УÇĂЛЧĔ*

Иртнĕ эрнере Çĕпрел районĕнче икĕ социаллă объект уçăлчĕ. Кивĕ Кахăрлă ялĕнче клуб, райцентрта çĕнĕ шкул хута кайрĕç. Вĕсене уçнă çĕре ТР Президенчĕ Минтимер Шаймиев хутшăнчĕ. Клуба вăл киноаппаратура, шкула «ПАЗ» автобус тата компьютер класĕ парнелерĕ. Журналистсен ыйтăвĕсене хуравланă май Минтимер Шаймиев иртнĕ çул республикăра 27 шкул хута яни çинчен пĕлтерчĕ. Вĕренӳ заведенийĕсем, ача сачĕсем тăвасси çине малашне те пысăк тимлĕх уйăрассине пĕлтерчĕ.

### *ПИРĔН ТЫРĂ — САУД АРАВИНЧЕ*

Тутарстан тырă сутма контракт тунă. Çак кунсенче 12 пин тоннăран тăракан пĕрремĕш парти Тухăç çĕршывне ăсаннă.

Тутарстанăн апат-çимĕç корпорацийĕн генеральнăй директорĕн çумĕ Алексей Манонин пĕлтернĕ тăрăх, килĕшӳпе пирĕн республика Сауд Аравине 50 пин тонна урпа, 60 пин тонна тулă сутать, çакă пĕрремĕш килĕшӳ. Хакĕсем те шалти рынокран 25 процент çӳлерех. Иртнĕ çул пирĕн республика çак çĕршыва пуçласа 16 пин тонна тĕштырă сутса пăхнăччĕ.

### *ÇУЛ-ЙĔР ТĂВАССИ ЧАКАТЬ*

Кăçал Тутарстанра 220 километра яхăн асфальт çул хума палăртнă. Юлашки ултă çул хушшинче ку кăтарту çулталăкне 600 километра çитнĕ. ТР премьер-министрĕн çумĕ Владимир Швецов пĕлтернĕ тăрăх, çул-йĕр хуçалăхĕн ыйтăвĕсене бюджет 60 процент таран кăна тивĕçтерет. Çулсем тăвас тĕлĕшпе паянхи куна Тутарстан Раççейри вăтам кăтартусенчен те кайра пырать. Республикăри 3101 ялсемпе хуласенчен 54 процентне кăна асфальтлă çулсем кĕнĕ.

Çакăнсăр пуçне кăçал çул-йĕр службисем 394 километр автоçулсем çинче капиталлă юсав ирттерме палăртнă. 100 миллион тенке яхăн «Хусан» аэропорта реконструкци тума, Нурлатра тата Агрызра чукун çул вокзалĕсем тума, Хусанти трамвай çулĕсене юсама уйăрнă.

### *КОМПЕНСАЦИ ПАРАÇÇĔ*

Сталинград патĕнчи çапăçу иртнĕренпе 60 çул çитнĕ май РФ правительстви «Сталинград çапăçăвне хутшăннисене тата унта пуçĕсене хунисен (вилнисен) арăмĕсене укçа-тенкĕ тӳлесси çинчен» йышăну турĕ. Унпа килĕшӳллĕн, çапăçăва хутшăннисене 900 тенкĕ, çапăçура вилнисен арăмĕсене, урăх качча кайман пулсан, 450 тенкĕ параççĕ. Укçа-тенке кăçалхи I кварталта Пенси фончĕн уйрăмĕсенче тӳлеççĕ.

### *КĔПЕРĔН ИККĔМĔШ ЧЕРЕТНЕ ТĂВАÇÇĔ*

Кама урлă тунă кĕперĕн пĕрремĕш черетне хута яни талăкне кунтан çичĕ пине яхăн автомашина каçарма май панă. Тĕрĕссипе вара ку çулпа талăкне 2,4 пине яхăн автомашина кăна иртет. Специалистсем шутланă тăрăх, ку кăтарту нормăрине тепĕр 2–3 çултан кăна çитмелле. Çавăнпа та кĕперĕн иккĕмĕш черетне хута ярассин актуаллăхĕ халлĕхе чакнă. Апла пулин те ăна тума 2003 çулта республика бюджечĕ 500 миллион тенкĕ уйăрнă, 470 миллион тенкĕ федераллă центртан килет.

**Хамăр инф.**